**Пĕрлĕхре вăй**

Костя кирпĕч пачкисене курсан:

— Атте, çакăн чухлĕ кирпĕче ăçтан тепĕр вырăна куçарса пĕтермелле? Ытла нумай, — терĕ кăмăлсăррăн.

— Ак çапла ĕçлер, ачам. Эпĕ малтан кирпĕчсене илсе аннӳне парап, аннӳ — аппуна, аппу — асаннӳне, асаннӳ — сана, эсĕ — пиччӳне, пиччӳ — кирлĕ вырăна.

ĕç вĕресе тăрать. Кирпĕчсем аларан алла хăвăрт куçаççĕ. Çемье сисмерĕ те — вунă пачка кирпĕч купаланса та тăчĕ.

Ахальтен-и ваттисем куç харать те, алă тăвать тесе каланă.

*Федорова, Л. Пĕрлĕхре вăй : [калав] / Л. Федорова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 400.*